25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 п.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
ИЮНЬ
16
ЫТЛАРИКУН
138(6073) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Парти организацийӗсен черетри задачисем

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XI-мӗш Пленумӗ «Сталин юлташӑн майӑн пӗрремӗшӗнчи приказне пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе парти организацийӗсем умӗнче тӑракан черетлӗ задачӑсем ҫинчен тата социализмлӑ ӑмӑртӑва сарса ярасси ҫинчен» Чарыков юлташӑн докладне сӳтсе явса, пирӗн ӗҫри ҫитӗнӳсене палӑртрӗ. Сталин юлташӑн историллӗ приказӗпе хавхаланнӑ рабочисем, колхозниксем тата служащисем производство программине тултарса пырас ӗҫре чылай пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. Чӑваш республикин промышленноҫӗнче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан шултра заводсем нумайӗшӗ апрель тата май уйӑхӗнчи плансене иртте рсе тултарчӗҫ. Электроаппаратура завочӗ Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Совечӗн тата Промышленноҫӑн пӗр Халӑх Комиссариачӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Шупашкар хулинчи промышленность май уйӑхӗнчи плана ытлапипех тултарчӗ. Вутӑ хатӗрлес, йывӑҫсене юхантывсем тӑрӑх юхтарас ӗҫсене республика вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртрӗ. Ҫавӑн пекех ҫурлакине те ӑнӑҫлӑн ӗҫлерӗ.

Ҫавӑнпа пӗрлех Парти Обкомӗн Пленумӗ пирӗн ӗҫри ҫитменлӗхсене кӑтартса пачӗ. Республикӑри промышленность, уйрӑмах вырӑнти промышленноҫпа промысла кооперацийӗн промышленноҫӗ халӗ те ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Капитальнӑй строительство тата ҫӗнӗ мощноҫсене ӗҫе ярас енӗпе ҫитменлӗхсем нумай. Пир-авӑр фабрикисене тата Улатӑртипе Долгополянӑри йывӑҫ завочӗсене тивӗҫлипе ӗҫлеттерме тытӑнман-ха.

ВКП(б) хула комитечӗсем, райкомсем предприятисен экономикине тӗплӗн пӗлсе ҫитме тӑрӑшни ҫук, ВКП(б) Пӗтӗм Союзри XVIII-мӗш конференцийӗн решенийӗсене ҫителӗксӗр пурнӑҫа кӗртсе пыраҫҫӗ, XVIII-мӗш партконференци решенийӗсене тата парти комитечӗсем хӑйсем йышӑннӑ решенисене предприятисенче мӗнле пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслесе тӑмаҫҫӗ. Наркомместпром предприятийӗсем, Енӗшпуҫӗнчи кирпӗч завочӗ, промкооперацин кирпӗч, черепица тӑвакан, грави, известь, чул хатӗрлекен предприятийӗсем ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Партин тата комсомолӑн хӑшпӗр хула комитечӗсем, райкомӗсем, профсоюзсен организацийӗсем социализмлӑ ӑмӑртӑва вӑйлатас тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлемеҫҫӗ, чылай предприятисенче партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе начар организациленӗ. Партин уйрӑм райкомӗсем промышленность ӗҫӗпе сахал интересленеҫҫӗ.

Вӑрнар райкомӗпе унӑн секретарӗ Сергеев юлташ районри предприятисем ҫине сахал ҫавӑрӑнса пӑхнӑ. Районри предприятисем начар ӗҫлеҫҫӗ. Фосфорит завочӗн ҫӗршыва валли питех те кирлӗ япаласем хатӗрлесе памалла. Анчах вӑл начар ӗҫлет. Вагонсене усӑсӑр тытса тӑнӑшӑн кӑна завод чугунҫула 17 пин тенкӗ тӳленӗ. Ҫав заводӑн ӗҫне лайӑхлатма, паллах ӗнтӗ, чи малтан унти пуҫламӗш парторганизацие вӑйлатмалла пулнӑ. Анчах Вӑрнар райкомӗ заводри пуҫламӗш парторганизацин секретарьне Лебедев юлташа урӑх ӗҫе куҫарнӑ. Кун хыҫҫӑн та Лебедев пӗр уйӑх ытла заводри парторганизацин секретарӗ пулнӑ. Завод директорӗ Молотников юлташ завод ӗҫӗсем ҫинчен райкомра ыйту лартма ҫине тӑрса ыйтнӑ хыҫҫӑн, райком бюровӗ майӑн 5-мӗшӗнче завод ӗҫӗсем ҫинчен сӳтсе явнӑ. Унта чылай калаҫнӑ, практикӑллӑ сӗнӳсем панӑ. Анчах ку ыйту тӑрӑх йышӑннӑ решение 23 кун хушшинче ҫырса та йӗркелемен.

Вырӑнти Промышленность Халӑх Комиссариачӗпе Апат-ҫимӗҫ промышленность Халӑх Комиссариачӗн руководителӗсем ҫав комиссариатсен аллинчи предприятисенче социализмлӑ ӑмӑрту мӗнле пынипе сахал интересленеҫҫӗ.

Республикӑри, районсенчи, фабрикӑсемпе заводсенчи хаҫатсем производствӑри ҫитӗнӳсем, уйрӑмах двухсотниксен, трехсотниксен тата тысячниксен ӗҫӗсем ҫинчен кӑна ҫыраҫҫӗ, социализмлӑ ӑмӑртӑва организацилес ыйтусене ҫутатмаҫҫӗ.

Хула комитечӗсен, райкомсен, МТС-сенчи тата чугунҫул ҫинчи политотделсен начальникӗсен, пуҫламӗш парторганизацисен предприятисенче, транспортра, колхозсенче, совхозсенче, МТС-сенче, учрежденисенче партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе вӑйлатмалла. Вӗсен хӑйсен пӗтӗм ӗҫне Сталин юлташӑн майӑн пӗрремӗшӗнчи приказне пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе туса пымалла. Социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса, ӑна массӑсен ӑмӑртӑвӗ туса ямалла. Рабочисене, колхозниксене тата служащисене пурне те ӑмӑртӑва хутшӑнтармалла.

Партипе комсомолӑн пуҫламӗш организацийӗсен, профсоюз органӗсен тата предприяти директорӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑва кунран куна ертсе пырас пулать, уйрӑм рабочисем тата бригадӑсем хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене мӗнле пурнӑҫа кӗртнине кашни кунах кӑтарту хӑмисем, стена хаҫачӗсем, нумай тиражлӑ хаҫатсем урлӑ пӗлтерсе тӑмалла.

Парти организацийӗсен ВКП(б) Пӗтӗм Союзри XVIII-мӗш конференцийӗн решенийӗсене ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пырас пулать, хуҫалӑх ӗҫне пӗтӗмпех вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек урӑхлатса ҫитерме, вӑрҫӑра кирлӗ продукцисене нумайрах туса кӑларассинче вырӑнти ресурссемпе усӑ курма хуҫалӑх организацийӗсен руководителӗсене пулӑшмалла.

Оборона валли ӗҫлекен предприятисене чӗртавар вӑхӑтра тӑратасси ҫине, ҫӗнӗ строительствӑсене туса ҫитерес, куҫса килнӗ предприятисене йӗркелесе ҫитерсе хӑвӑртрах ӗҫе ярасси ҫине ытларах ҫаврӑнса пӑхмалла.

Чугунҫул тата юханшыв транспорчӗсенче большевикла йӗркелӗх туса ҫитермелле. Чугунҫул станцийӗсем, паровоз деповӗсем, вагон участокӗсем, ҫул йӗр дистанцийӗсем графика пӗр тикӗс пурнӑҫа кӗртсе пымалла, государство грузӗсене турттарас плана иртте рсе тултармалла.

Предприятисем валли топливо ҫителӗклӗ парса тӑрасси, хӗллене валли вутӑ, торф халех хатӗрлесе ҫитересси — парти тата хуҫалӑх организацийӗсен пысӑк задачи пулса тӑрать. Вутӑ касса хатӗрлес, торф кӑларас ӗҫсене вӑйлатмалла. Предприятисем, шкулсем, больницӑсем, учрежденисем валли хутмалли япаласем халех ҫителӗклӗ хатӗрлесе хумалла.

Ҫӗнӗ рабочисене ӗҫлеме вӗрентес тата воспитани парас ӗҫе татӑклӑнах лайӑхлатни кирлӗ. Мастерсен, слесарьсен, токарьсен курсӗсене организацилемелле, рабочисене уйрӑмшарӑн вӗрентсе, вӗсен пӗлӗвӗсене ӳстерсе пымалла. Кая юлнӑ рабочисене малта пыракан рабочисем пек ӗҫлеме вӗрентмелле, ӗҫ ҫине ӑнланулӑн пӑхма воспитани памалла. Производствӑра ӗҫлеме хӗрарӑмсене хутшӑнтарас, национальнӑй кадрсем хатӗрлес ӗҫсене лайӑхлатас пулать. ФЗО шкулӗсенчен вӗренсе тухнӑ рабочисене предприятисенче ӗҫлеме, квалификацие ӳстерсе пыма кирлӗ условисене туса памалла.

Обком пленумӗ партин хула комитечӗсемпе райкомӗсене, райсоветсен исполкомӗсене, пуҫламӗш парторганизацисене тата профсоюз органӗсене ӗҫҫыннисен материальнӑй тата культурӑпа йӑла условийӗсене лайӑхлатассишӗн тӑрӑшассине вӑйлатма, уйрӑмах боецсемпе командирсен ҫемьисемшӗн тата куҫса килнӗ ҫемьесемшӗн ытларах тӑрӑшма, суту-илӳ предприятийӗсен, столовӑйӗсен, буфетсен, ОРС-сен, подсобнӑй хуҫалӑхсен ӗҫӗсене тӗрӗслесе тӑма хушрӗ.

Пленум ВКП(б) хула комитечӗсемпе райкомӗсене пуҫламӗш парторганизацисенче партин организациллӗ ӗҫне тӗпренех лайӑхлатма хушрӗ. Парти пухӑвӗсене тӑтӑшах тата пахалӑхлӑн иртте рмелле. Актив хушшинче куллен ӗҫлемелле. Предприятисенчи пуҫламӗш парторганизацисене тата цехсенчи партгруппӑсене вӑйлатмалла.

Пленум парти организацисене парти ретне ӳстерсе пырас ӗҫе вӑйлатма чӗнчӗ.

Парти организацийӗсен халӗ Обкомӑн XI-мӗш пленумӗн решенийӗсене пурнӑҫа кӗртессишӗн пӗтӗм вӑй-хала хурса ӗҫлемелле, республикӑри ӗҫҫыннисене Хӗрлӗ Ҫар валли ытларах та ытларах хӗҫпӑшал тата апат-ҫимӗҫ парса тӑрас тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлеме организацилемелле.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Совет Союз Геройне подполковника Борис Феоктистович Сафонова иккӗмӗш хут „Золотая Звезда" медаль парса наградӑласси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳре командованин боевой заданийӗсене Совет Союз Геройӗн Званине илме право памалӑх кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн Совет Союз Геройне подполковника Борис Феоктистович Сафонова иккӗмӗш хут «Золотая Звезда» медаль парса наградӑлас тата, бронзӑран бюст туса, ӑна награда илекенӗн тӑван ҫӗршывӗнче постамент ҫине лартас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 ҫулти июнӗн 14-мӗш.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 14-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Июнӗн 14-мӗшӗнче **Харьков** енче пирӗн войскӑсем противникӑн танкӗсемпе пехотине хирӗҫ ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн **Севастополь** участокӗнче ҫаплах хаяр ҫапӑҫусем пынӑ, ҫав ҫапӑҫусенче пирӗн войскӑсем противникӑн атакисене сире-сире яраҫҫӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче вырӑнти ҫапӑҫусем пулса пынӑ.

Иртнӗ эрнере, июнӗн 7-мӗшӗнчен пуҫласа 13-мӗшне ҫитиччен, сывлӑшри ҫапӑҫусенче, противникӑн аэродромӗсем ҫинче тата зенитнӑй артиллери пенипе нимӗҫсен 377 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн ҫав вӑхӑт хушшинче 135 самолет пӗтнӗ.

Баренц тинӗсӗнче пирӗн карап противникӑн икӗ транспортне путарнӑ, вӗсен водоизмещенийӗ 15.000 тонна.

* * *

Июнӗн 13-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 90 ҫити танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 280 автомашинине, горючи тултарнӑ икӗ автоцистернине пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, 30 орудипе минометӑн вутне пусарса лартнӑ, боеприпассен 3 складне тата горючи складне сирпӗнтерсе янӑ, чугунҫул ҫинчи эшелона аркатса тӑкнӑ, противникӑн пехотине 4 ротӑна ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Харьков енче пирӗн войскӑсем, противникӑн пысӑк вӑйӗсене хирӗҫ ҫапӑҫса, противника пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Кулик юлташ командир пулса ертсе пыракан танксен подразделенийӗ противникӑн мото-пехотине 3 батальона ҫити тата артиллерин 2 батарейине пӗтерсе тӑкнӑ. Горбатов командир пулса ертсе пыракан боецсем, тӑшманӑн атакисене сире-сире ярса, нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 250 ҫынна пӗтерсе тӑкнӑ тата темиҫе ҫынна тыткӑна илнӗ. Харьков енчи участоксенчен пӗринче пирӗн артиллеристсем нимӗҫсен 15 танкне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть противника халӑх пурӑнакан Д. пунктӗнчен хӗссе кӑларнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен 400 ҫити вилли выртса юлнӑ, нимӗҫсем тата хӗҫпӑшал нумай пӑрахса хӑварнӑ.

* * *

Калинин фронтӗнчи участоксенчен пӗринче противник, артиллерирен персе хатӗрленсе, тӑватӑ хутчен атакӑна кӗре-кӗре кайнӑ. Исаевпа Якушин юлташсем командир пулса ертсе пыракан подразделенисем кашни хутӗнчех нимӗҫсене ҫывӑхах пыма панӑ та мӗнпур йышши хӗҫпӑшалтан пере пуҫланӑ. Гитлеровецсен кашнинчех хӑйсен малтанхи позицийӗсем ҫине чакса каймалла пулнӑ, вӗсем пысӑк ҫухатусем тӳснӗ. Тепӗр участокра Волков юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири артиллеристсем нимӗҫсен йывӑр орудийӗсен батарейине пӗтерсе тӑкнӑ тата противникӑн кавалери отрядне сапаласа янӑ.

* * *

Июнӗн 13-мӗшӗнче нимӗҫсен авиацийӗ пилӗк хутчен вӗҫсе пырса Мурманск хулине тапӑнма хӑтланнӑ. Анчах хула патне противникӑн уйрӑм самолечӗсем кӑна ҫитме пултарнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери пенипе нимӗҫсен 8 самолетне пӗтернӗ. Ҫар объекчӗсем сиен курман. Гражданла халӑх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур.

* * *

Тӗлрен те тӗл перес ӗҫӗн мастерӗ Держиев юлташ, вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа 181 гитлеровеца вӗлернӗскер, темиҫе ҫынна снайпер пулма вӗрентсе ҫитернӗ. Июнӗн 12-мӗшӗнче Держиев юлташ вӗрентсе хатӗрленӗ снайперсем нимӗҫсен самолетне персе ӳкернӗ. Снайпер Ильин юлташ пӗр уйӑх хушшинче 51 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Пирӗн самолетсем нимӗҫ войскисем тӑракан вырӑна гитлерла Германие тата Европӑри унпа пӗрле вӑрҫакан ҫӗршывсене хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра пӗр-перинпе союзлӑ пуласси ҫинчен ССР Союзӗпе Великобритани хушшинче тунӑ Договор текстне, ҫавӑн пекех тата ССР Союзӗпе Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительствисем хушшинче тунӑ Килӗшӳ текстне пичетленӗ листовкӑсем пӑрахса тухнӑ

* * *

В. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен пӗрлешнӗ отрячӗсем (Ленинград облаҫӗ) 5 кун хушшинче нимӗҫсен 1.355 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ, противникӑн 12 танкне ҫӗмӗрнӗ, пехота турттарса пыракан 8 автомашинӑна сирпӗнтерсе янӑ, автоматлӑ 2 туппа тата минометсен пӗр батарейине пӗтерсе тӑкнӑ. Партизансем нимӗҫсенчен 4 танк, 3 миномет, 2 станковӑй пулемет, 17.000 патрон, 300 ещӗк снаряд тата ытти тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗсем тытса илнӗ.

* * *

Нимӗҫсен 11-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 11-мӗш артполкра взвод командирӗ пулнӑ Вернер Скузде, Ленинград фрончӗн участокӗсенчен пӗринче тыткӑна лекнӗскер, ҫапла каласа панӑ: «Эпӗ отпуска кайма хатӗрленнӗччӗ. Анчах та вырӑссем кӗтмен ҫӗртен наступлени пуҫласа ячӗҫ те, манӑн мӗнпур плансемпе шанчӑксем пӗтӗмпех пӗтсе ларчӗҫ. Артиллерирен хаярӑн персе хатӗрленсе ҫитсен, вырӑссен пехоти, танксем хӳтӗленипе, пирӗн позицисем патнелле хӑватлӑ хум пек кӗрлесе куҫма пуҫларӗ. Эпӗ блиндажа кӗрсе пытантӑм, унта тата 50 салтак пухӑннӑ. Артиллери пенӗ чухне эпир пурте хамӑра хамӑр халь тин пӗтрӗмӗр ӗнтӗ тесе шутланӑ. Ун пек хӑрушлӑха эпӗ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа та курман. Хӑшпӗр салтаксем ӑҫта куҫ курнӑ ҫавӑнта тарма шутларӗҫ, анчах та тахӑшӗн вӑхӑтра шурӑ флаг кӑларса ҫакма ӑс ҫитнӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн блиндажран сехрисем хӑпса тухнӑ 50 салтак пӗрин хыҫҫӑн тепри шуса тухма тытӑнтӑмӑр. Ытти блиндажсемпе окопсенче тата 100 ҫын, нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсем, пӗрре пемесӗр тыткӑна парӑнчӗҫ».

* * *

Нимӗҫсен фашистла мерзавецӗсем пӗр кун хушшинче Сумы облаҫӗнчи Большая Березка ялӗнче 52 ҫынна чиксе вӗлернӗ. Фашистла ирсӗрсем вӗлериччен вӗсене тем тӗрлӗ мӑшкӑлласа асаплантарнӑ, вӑл ҫынсем хушшинче пӗр хӳтӗлӗхсӗр хӗрарӑмсемпе пӗчӗк ачасем те пулнӑ.

Июнӗн 15-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июнӗн 15-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле фронтра паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Харьков енче пирӗн войскӑсем противника чӗрӗ вӑйпа техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Пӗр участокра кӑна икӗ кун хушшинче гитлеровецсен 2.850 салтакӗпе офицерӗ вилнӗ. Тыткӑна илнисем пур. Ҫав участокра пирӗн чаҫсем нимӗҫсен 19 танкне, 2 бронемашинине тата 30 мотоциклне пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсен 11 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Карпов юлташ командир пулса тӑракан гвардейски чаҫӑн участокӗнче (Калинин фрончӗ) нимӗҫсен пехоти, авиаци тата танксем пулӑшса пынипе пирӗн позицисене атакӑлама хӑтланнӑ. Гвардеецсем гитлеровецсен ҫав атакине сирсе пӑрахнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче хӑйсен вилнӗ салтакӗсене 200 ҫынна ытла пӑрахса хӑварса, нимӗҫсем каялла чакнӑ. Ҫав ҫапӑҫура пирӗн минометчиксем, артиллеристсем тата снайпер-пехотинецсем хӑйсене лайӑх енчен кӑтартнӑ. Шукбаев юлташӑн миномет расчечӗ темиҫе хут персе ярсах станковӑй пулемета тата 30 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Семибаламут юлташӑн подразделенинчи артиллеристсем тӗл персе нимӗҫсен танкне тата автоматлӑ туппине ҫӗмӗрнӗ. Гвардин снайперӗ Брюханов красноармеец винтовкӑран персе нимӗҫсен «Юнкерс—88» йышши самолетне ӳкернӗ. Тамарин юлташӑн подразделенинчи гвардеецсем ушкӑнпа пӗрле персе нимӗҫсен икӗ бомбардировщикне ӳкернӗ.

* * *

Эсэсовецсен батальонӗ, 11 танк пулӑшса пынипе, пирӗн чаҫа атакӑлама хӑтланнӑ (Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ фрончӗ). Вӑйлӑн хирӗҫ пырса ҫапса, пирӗн боецсем противника каялла сирсе янӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн ҫӗршер вилли выртса юлнӑ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Противникӑн тылӗнче кӗрешекен пирӗн боецсен пӗр ушкӑнӗ икӗ ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Ҫар пурлӑхӗ тиенӗ 14 вагон, автомашинӑсем тиенӗ 2 платформа тата войскӑсем турттарса пыракан темиҫе вагон ҫӗмӗрӗлнӗ. Нимӗҫсен 60 салтакӗпе офицерӗ вилнӗ е аманнӑ.

* * *

Михайлов юлташ командир пулса тӑракан чаҫри снайперсем пӗр кун хушшинче 20 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Красноармеецсем Денисенко, Пономаренко тата Караченцев юлташсем уйрӑмах лайӑх результатсем кӑтартнӑ.

* * *

К. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячӗ, Украинӑн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекенскер, 27 нимӗҫ оккупантне пӗтерсе тӑкнӑ тата 3 нимӗҫ салтакне тыткӑна илнӗ. Партизансем противникӑн пӗр танкне тата темиҫе автомашинине сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Италин экспедициллӗ корпусӗн «Челере» ятлӑ дивизийӗнчи берсальерсен 6-мӗш полкӗнчи иккӗмӗш мотоциклетнӑй ротӑри салтак А. Мартинелли ҫапла каласа панӑ: «Германи ҫарӗ тумалли наступлени ҫинчен нимӗҫсен пропаганди хӗлле те, ҫуркунне пуҫламӗшӗнче те питӗ нумай сӑмах сарнӑ. Ун чухне Итали салтакӗсем вӑрҫа час пӗтерессине пӑртак шанкаланӑ. Халӗ ӗнтӗ вӗсем шанма йӑлтах пӑрахнӑ, вӗсем нимӗҫсен кирек мӗнле наступленийӗ те арканса каятех тесе шутлаҫҫӗ. Итали салтакӗсем ку вӑрҫӑра Германия ҫӗнтерессине ӗненмеҫҫӗ. Итали салтакӗсенчен нумайӗшӗ халь пулса иртекен ӗҫсем пирки шухӑша кая пуҫларӗҫ. Вӗсем ҫак йывӑр пурнӑҫран ӑслӑн та чыслӑн ҫӑлӑнса тухма ҫул шыраҫҫӗ, тыткӑна парӑнмалли ҫинчен ытларах та ытларах калаҫа пуҫларӗҫ».

* * *

Нимӗҫсен 83-мӗш пехотнӑй дивизири ветеринари ротинчен тыткӑна лекнӗ салтак Альфред Ен ҫапла каласа панӑ: «1942 ҫулти майӑн 21-мӗшӗнче 33-мӗш дивизири саперсен ротин командирӗ обер-лейтенант фон Бейервитц каларӗ. Эпӗ Российӑна хирӗҫ вӑрҫни шанчӑксӑр ӗҫ пулнине ӗненсе ҫитрӗм, ҫавӑнпа та урӑх вӑрҫасшӑн мар, терӗ. Ӑна ҫавӑнтах арестлерӗҫ те хытӑ хуралласа тыла илсе кайрӗҫ. Ҫав обер-лейтенантӑн погонӗсене татса илнине салтаксем курнӑ».

* * *

Гитлеровецсен юнлӑ террорӗ Франци халӑхӗн боевой шухӑш-кӑмӑлне ҫапса хуҫайман. Франци патриочӗсем нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ вӑйлӑрах та вӑйлӑрах кӗрешеҫҫӗ. Париж хӗрринче 6 электричество мачтине ҫӗмӗрнӗ. Иврта нимӗҫсен 3 грузовикне ҫунтарса янӑ. Парижра Иена кӗперӗ патӗнче такамсем нимӗҫсен хурал тӑракан посчӗ ҫине граната ывӑтнӑ. Вилетскотобойни таврашӗнче патриотсем нимӗҫсен отрячӗ ҫине бомба пӑрахнӑ. Взрыв пулнипе 6 салтак вилнӗ. Нумай ҫын аманнӑ.

Совет Союзӗ Великобританипе Договор тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Килӗшӳ тунине Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисем хӗрӳллӗн саламлаҫҫӗ

Республикӑра пур ҫӗрте те митингсемпе пухусем пулса иртеҫҫӗ. Рабочисем, колхозниксем тата совет интеллигенцийӗ Совет Союзӗпе Великобритани тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем хушшинчи ҫыхӑнусене аталантарас ӗҫре Англипе Совет Союзӗ тунӑ Договор политикӑллӑ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине паллӑ тӑваҫҫӗ.

Ку Договор гитлерла Германие хӑвӑртрах аркатса тӑкассине пурнӑҫа кӗртме, пире хамӑр тӗллев патне—ҫӗнтерӳ патне хӑвӑртрах ҫитме пулӑшнине ӗҫҫыннисем ӑнланаҫҫӗ. Ҫавӑнпа ӑна чӗререн кӑмӑлласҫҫӗ. 1942 ҫулта Европӑра иккӗмӗш фронт тӑвасси ҫинчен Совет Союзӗ Великобританипе тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе калаҫса татӑлни ӗҫҫыннисене хавхалантарать.

* * *

ВӐРНАР. Совет Союзӗ Великобританипе Договор тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствипе Килӗшӳ туни ҫинчен районри ӗҫҫыннисем нумайӗшӗ радио тӑрӑх ушкӑнпа итленӗ. Халӗ районри актив Договора кашни колхозника ӑнлантарса парас тӗлӗшпе ӗҫлет.

Ҫак кунсенче Анаткас Хапӑсри Чапаев ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксен аслӑ пухӑвӗ пулчӗ. Унта вӑтам шкул директорӗ Улангаев юлташ Совет Союзӗ Великобританипе Договор, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Правительствипе Килӗшӳ туни ҫинчен ӑнлантарса пачӗ.

Вӑл ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн, колхозниксем пӗрин хыҫҫӑн тепри туха-туха калаҫрӗҫ. Кашниех Договора ырлаҫҫӗ, колхозра татах та лайӑхрах тӑрӑшса ӗҫлеме пулаҫҫӗ.

Е. ВОЛКОВ.

ШУПАШКАР. Всевобучӑн Атнашри вӗренӳ пунктӗнчи боецсем Совет Союзӗпе Великобритани Договор тунӑ май митинг туса иртте рчӗҫ. Командир Г. Андреев юлташ, митинга уҫса, Совет Союзӗпе Великобритани хушшинче тунӑ Договор пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни ҫинчен каласа пачӗ. Ун хыҫҫӑн Станкевич, Афанасьев боецсем тухса калаҫрӗҫ. Вӗсем те Договора ырларӗҫ.

— Иккӗмӗш фронт ирсӗр тӑшмана хӑвӑртрах ҫапса ҫӗмӗрме май парать. Ку вара пире, всевобуч боецӗсене, вӑрҫӑ ӗҫне татах та тӑрӑшса вӗренме хушать. Эпир хӗҫпӑшалсене тӗплӗн вӗренсе ҫитсе, харпӑрхӑй ӗҫӗн мастерӗсем пулмалла. Унтан фронта кайса, совет ҫӗрне гитлерла мерзавецсенчен ирӗке кӑларакан боецсем пулмалла,— тет Афанасьев юлташ.

Митинг хыҫҫӑн всевобуч боецӗсем воскресник туса иртте рнӗ. Вӗсем ҫав кун тонна ҫурӑ тимӗр-тӑмӑр, темиҫе килограмм цветной металл пухнӑ.

А. ОРЛОВ.

* * *

КАНАШ. Пирӗн Правительство Великобританипе Договор тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Килӗшӳ тунине районри ӗҫҫыннисем тулли кӑмӑлпа ырлаҫҫӗ.

Июнӗн 13-мӗшӗнче вагонсем юсакан заводра митинг пулса иртрӗ. Митингра рабочисем, служащисем тата инженерла-техникла работниксем нумай пулчӗҫ.

— Виҫӗ хӑватлӑ держава—СССР, Великобритани тата США—союзлӑ пулни Гитлерӑн йыткӗтӗвӗсене аркатса тӑкас вӑхӑта ҫывхартать. Ҫакӑ пире, ӗҫҫыннисене, тата тимлӗнрех ӗҫлеме хавхалантарать, — терӗ митингра завком председателӗн заместителӗ Баринов юлташ.

Ҫакӑн пек митингсемпе пухусем районри ытти предприятисенче те пулса иртрӗҫ.

П. НИКОЛАЕВ.

* * *

Июнӗн 14-мӗшӗнче всевобучӑн Шупашкарти пунктӗнче орденоносец старши политрук В. Осипов «Халӑхи вӑхӑтри лару-тӑру ҫинчен» доклад туса пачӗ.

Доклад итленӗ хыҫҫӑн пурте пӗрсаслӑн йышӑннӑ резолюцире всевобуч боецӗсем, командирӗсем тата политработникӗсем ССР Союзӗпе Великобритани союзлӑ пуласси, пӗр-пӗрне пулӑшасси ҫинчен тунӑ Договора тата ССР Союзӗпе Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем хушшинче тунӑ Килӗшӗве ырларӗҫ.

Всевобуч боецӗсем нимӗҫ фашисчӗсене вӑйлӑн ҫапса аркатмашкӑн ҫар ӗҫне лайӑх вӗренсе ҫитме пулчӗҫ, дисциплинӑна ҫирӗп тытса пыма сӑмах пачӗҫ. Командирсемпе политработниксем всевобуч пунктӗнче лайӑх стрелоксем, пулеметчиксем, автоматчиксем, снайперсем хатӗрлеме пулчӗҫ.

П. Д-н.

Заем укҫине срокченех тӳлеҫҫӗ

Чӑвашсен ялхуҫалӑх институтӗнчи студентсем Государствӑн 1942 ҫулти Военнӑй Заем укҫине срокченех тӳлеҫҫӗ. Юлашки уйӑх хушшинче кӑна студентсем заем укҫине 2.135 тенкӗ тӳлерӗҫ. Студентсем А. Горохова, Т. Егорова, А. Леонтьева юлташсем, зоотехника факультетӗнчен вӗренсе тухакансем Ломоносова, Николаев, Яковлева юлташсем заем укҫине пӗтӗмпех тӳлесе татрӗҫ.

М. СМЕТАНИН.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии" звенине тума

ҪӖРПУ. Самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума районри ӗҫҫыннисем Госбанка 6.700 тенкӗ укҫа хывнӑ. Тӑвӑшкассинчи вӗренӳ пунктӗнчи боецсем 2.700 тенкӗ, Ҫӗрпӳри профшкулра 1.400 тенкӗ, «Цивильстрой» колхозра 1.500 тенкӗ пухса панӑ.

В. ФАДЕЕВ,
ВКП(б) райкомӗн ҫарӗҫ отделӗн заведующийӗ.

* * *

КАЛИНИНО. Районри ӗҫҫыннисем самолетсен звенине тӑвас ӗҫе активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. «Броневик» колхозри комсомолецсемпе ҫамрӑксем 1.200 тенкӗ, Папанин ячӗпе тӑракан колхозра 800 тенкӗ, «Новый путь» колхозра пӗр пин тенкӗ, Пушкин ячӗпе тӑракан колхозра 1.300 тенкӗ укҫа пухӑннӑ.

* * *

ХӖРЛӖ ЧУТАИ. Ишлей районӗнчи хӗрарӑмсен подразделенийӗ самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума чӗнсе калани не всевобуч боецӗсем пухура сӳтсе яврӗҫ. Ҫавӑн хыҫҫӑн вӗсем 866 тенкӗ укҫа пухрӗҫ.

Районри колхозсенче те самолетсен звенине тума укҫа пухас ӗҫ хӗрӳллӗн пырать. ВКП(б) ячӗпе тӑракан колхозра 800 тенкӗ, «Трудовик» колхозра 800 тенкӗ укҫа пухӑннӑ. Хӗрлӗ Чутайри сельпора ӗҫлекенсем 200 тенкӗ, редакцинче ӗҫлекенсем 150 тенкӗ укҫа пухса панӑ.

М. ТИХАНИН.

430 тенкӗ—оборона фондне

СЕНТӖРВӐРРИ. Древтехникумра вӗренекенсен музыка кружокӗ нумаях пулмасть вечер туса иртте рчӗ. Вечера Мария Коган ертсе пычӗ.

Вечера пынисенчен билет укҫи 430 тенкӗ пухӑнчӗ. Ҫав укҫана вӗренекенсем ҫӗршывӑн оборона фондне хыврӗҫ.

А. РАЗИН.

СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ВЕЛИКОБРИТАНИ ТАТА США ХУШШИНЧИ ТУСЛĂХ ÇИРĔППЛЕНСЕ ПЫРАТЬ

В. М. Молотов Лондонра тата Вашингтонра пулни çинчен, Англипе Совет Союзĕ хушшинче Договор туни çинчен Ютçĕршывсенче мĕн çырассĕ

АНГЛИЯ

Молотов юлташ Англире пулни

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Молотов хăйĕн [illegible] Англире пурăннă вăхăтра ăна Букингэм дворецра король йышăннă. Совет посолĕ [illegible] çар кабинечĕн членĕсемпе, ытти паллă çынсемпе тĕл пулнă. [illegible] çапах тапăнмалли [illegible] военсем те Молотовпа Майский калаçса килнĕ. Договор алă пуснă [illegible] çур сехетрен Молотов Черчилльпе пĕрле [illegible] авиаци станцине кайса килнĕ. Унта вĕсем Молотовпа [illegible] юлташĕсем Пĕрлешÿллĕ Штатсене тухса кайас умĕн кайнă.

Икĕ аслă державăн кĕрешÿри союзĕ

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви дипломатилле обозревателĕ Феркюссон çапла çырать: вăрçă хĕрсе пынă вăхăтра пурăнакан Европа июнĕн 11-мĕшĕнче хăйĕн хăрушсăрлăхĕн хартине илчĕ. Икĕ аслă держава вăрçăра çирĕп союз турĕç, çак союз вăрçă хыççăнхи пурнăçăн никĕсĕ пулса тăрать.

Договорăн практикăри вăйĕ, тесе çырать Феркюссон, Европăри вăрçăра çак палăрĕ. 1942 çулта иккĕмĕш фронт тăвассин васкавлă задачи пирки килĕшÿ тунине пысăк вăйлă тĕпленĕ те килĕшÿсем тунă, вĕсене икĕ çĕршывăн çар руководителĕсем калаçса татăлнă хыççăн тунă.

Эпĕ шанăçланмастăп, тенĕ малалла Феркюссон, çак килĕшÿсен результачĕсем çывăх вăхăтрах палăрĕç, тĕнĕл держависене хирĕç хăватлă та пултаруллă наступлени пуçланса кайĕ.

Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă Договор пирки лордсен палатинче тухса каланисем

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер каçхине лордсен палатинче Кренборн сăмах каланă, вăл хăйĕн сăмахне Иден общинăсен палатинче каланă сăмах пекех каласа панă.

Лейборист Лорд Эдиссон килĕшÿ тунăшăн правительствăпа ютçĕршыв ĕçĕсен министрне саламланă. Çак калаçусем, — тенĕ Эдиссон, — чи йывăр калаçусем пулнă. «Эпир, — тенĕ вăл малалла, — Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Британи империн çĕршывĕсем пурин çинчен те пĕр-пĕрне пĕлтерсе тăнă тесе калание савăнăçлăн палăртатпăр. Молотов халĕ хăйĕн çĕршывне чиперех таврăнни пире савăнтарать, вăл çак калаçусене ăнăçлăн вĕçлеме чылай пулăшнă. Çак килĕшÿ историре питех те пысăк вырăн йышăнса тăрасса эпĕ пĕтĕмĕшпех шанса тăратăп».

Либерал лорд Сэмюэль Совет Российипе тунă килĕшĕве чĕререн саламланă. «Молотов Англие килнине вăрттăнлăхра питех те лайăх сыхласа усранă. Эпир Молотова вăл пирĕн пата килнĕшĕн тата кун хыççăн Пĕрлешÿллĕ Штатсене кайнăшăн тав тăватпăр. Вăл хăйĕн çĕршывне чиперех таврăннине пĕлме пире питех те кăмăллă».

Великобританин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ г. А. Иден Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патне янă телеграмма

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Великобританин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕнчен г. А. Иденран çакăн пек телеграмма илнĕ (ăна А. Иден хăй патне В. М. Молотов Англирен тухса кайнă чухне ярса хăварнă телеграмма çине, июнĕн 13-мĕшĕнче пичетлесе кăларнăскер çине, ответлесе янă):

«Сирĕн çырăвăршăн Сире хĕрÿллĕн тавтăватăп.

Халĕ пирĕн икĕ çĕршыв хушшинче договор тунипе çав тери ăнăçлăн вĕçленнĕ калаçусене хутшăнса ĕçleme Великобритание Хăвăр килме пултарнăшăн эпĕ питĕ савăнтăм.

Эпĕ те, Сирĕн пекех, çакна шанатăп: çак Договор вăл пирĕн çĕршывсем хушшинчи Союза малалла çирĕплетсе пыма пулăшĕ тата вăл гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра та, эпир çĕнтернĕ хыççăнхи мирлĕ çулсенче те ирĕке юратакан мĕнпур халăхсен пĕрлехи ĕçне тума пулăшĕ.

АНТОНИ ИДЕН».

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕМ

В. М. Молотов юлташ США-ра пулни

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Нью-Йоркран çапла пĕлтерет: Молотов нумай вăхăт хушши çул çинче пулнă пулин те Америкăри пичет Рузвельт патĕнче Молотов пулнине вăрттăнлăхра тытса усрарĕ. Çак çулти чи паха пĕлтерĕве пичетлессине хаçатсем икĕ эрнене яхăн тÿсĕмлĕн тăхтаса тăчĕç, историллĕ калаçусем хыççăн Молотов Российăна чиперех таврăнни çинчен паян ирхине пĕлтерÿсем килнĕ хыççăн çеç ун çинчен пичетлесе кăларчĕç.

Молотов Лондонран майăн 29-мĕшĕнче вырăссен тăватă моторлă бомбардировщикĕ çине ларса килчĕ. Вашингтонра вăл Рузвельтпа тата ытти çынсемпе калаçнă. Молотовпа пĕрле çар çыннисем тата ытти помощниксем çÿренĕ. Аэродром çинче вĕсене государственный секретарь Хэлл тата ытти представительсем кĕтсе илнĕ. Америкăра пулнă чухне Молотов хăйĕн вăхăтне пуринчен ытла Шурă Çуртра Рузвельтăн хăни пулса ирттернĕ. Вăл историллĕ çуртра, Блейр Хауз çуртĕнче, государственнăй департаментпа юнашар, темиçе кун пурăннă.

Ю т ç ĕ р ш ы в с е н ч е

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: июнĕн 12-мĕшĕнче Англин разведка тăвакан самолечĕсем июнĕн 12-мĕшĕнче Çурçĕр-Хĕвеланăç Германири темиçе пункт çине бомбăсем пăрахнă. Континент çинче июнĕн 8-мĕшĕнчен пуçласа çанталăк начар тăнă пирки Англин бомбардировка тăвакан авиацийĕ минăсем лартса тухас ĕçе çеç туса пынă.

Англин «Спитфайр» йышши истребителĕсем ĕнер кăнтăрла противникăн Çурçĕр Францири промышленность объекчĕсем çине, газ резервуарĕсем çине тата çыхăнăвĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

Противникăн авиацийĕ июнĕн 14-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Кăнтăр Англири хуласенчен пĕрин çине бомбăсем пăрахнă.

Англи авиацийĕ Кельн çине вĕçсе пырса тапăннин результачĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 14-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсем Кельн çине вĕçсе пырса тапăннă чухне ÿкерсе илнĕ фотографисене тĕплĕн сăнаса вĕренни çакна кăтартнă: çавăн чухне вĕçсе пырса тапăннипе пула 250 ытла завод çуртĕ çĕмĕрĕлнĕ. Кельна Германири ытти хуласенчен пуринчен те ытларах сиен кÿнĕ. Хула варринчи 120 гектар талккăш территори çинче, общественнăй çуртсемпе суту-илÿ çурчĕсем вырнаçнă вырăнта пур çуртĕсем те ишĕлнĕ. Кунсăр пуçне, пушарсем тухнипе тата фугаслă бомбăсем çурăлнипе Кельн хĕррипчи промышленность предприятийĕсем тата пурăнмалли çуртсем вăйлăн сиенленнĕ. Хулан хĕвеланăç енчи хĕрринчи кварталсем те тата юханшывăн хĕвелтухăç енчи промышленноçлă район та нумай сиенленнĕ. Чугунçулсене сиен тунă пирки чугунçулсем тăрăх поездсем çÿресси арканса кайнă.

Анкарари Папен çине „тапăннă“ текен ĕçе пăхакан судра

Июнĕн 10-мĕшĕнче Анкарара Германи посолĕ Папен çине «тапăннă» текен ĕçе пăхакан судăн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Корнилов хăйне хÿтĕлекен сăмаха каланă. Июнĕн 11-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларура хăйне хÿтĕлекен сăмаха Павлов каланă.

Залра халăх тул-тулли пулнă. Павловпа Корниловăн иккĕшин сăмахĕсене те питех те хытă итлесе ларнă. Корниловпа Павлов, ытла та вăйлă логикăллă тата ĕнентерÿллĕ каласа, айăпсене хăйсем çинчен сирсе янă, вĕсем çав вараланчăк, провокацилле ĕçе пачах та хутшăнманнине тĕплĕн кăтартса панă.

Вĕсем иккĕшĕ те судран хăйсене пĕтĕмĕшпех тÿрре кăларма ыйтнă.

Ютçĕршыв çыннисен тата Турци общественноçĕн çав судра пулнă йышлă представителĕсем пурте пĕр шухăшлă пулса çапла калаççĕ: Корниловпа Павлов Папен çине «тапăннă» текен ĕç вăл провокацилле инсценировка кăна пулнине вĕçне çитичченех тăрă шыв çине кăларса тăратрĕç, вĕсем хăйсем çав «ĕçе» нимĕн чухлĕ те хутшăнманнине ĕненмеллех кăтартса пачĕç, теççĕ.

Суд июнĕн 17-мĕшчен чарăннă. Июнĕн 17-мĕшĕнче суд хăй йышăннă приговора вуласа памалла. (ТАСС).

Конгресăн паллă деятелĕсем каласа пани

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 12-мĕш. (ТАСС). 1942 çулта Европăра иккĕмĕш фронт тăвасси çинчен Америкăна Англи пĕлтерни [illegible] Америкăри конгрессăн паллă деятелĕсем тата çĕршывăн общественноçĕ хĕрÿллĕн ырласа кĕтсе илнĕ. Америкăн агентствисем радиостанцисем Вашингтонпа Лондонра пулнă деятельсем каласа панисене темиçе минут хушшинчех пĕтĕм çĕршывĕпе сарнă.

Вăрçă умĕн усăллă изоляционистсем пулнă çынсем тухса каланă: сенатор Най 1942 çулта иккĕмĕш фронт тăвасси çинчен [illegible] «Эпĕ [illegible] эпир [illegible]» тенĕ.

Сенатăн ютçĕршыв ĕçĕсен комиссийĕн председателĕ Коннели çапла каланă: Совет Союзĕпе Америка пĕрле ăнланни пĕрлешнĕ [illegible] вăрçăра вăй хăватне чылай ÿстерĕ. «Росси, тенĕ вăл, халĕ вăрçăра пĕрре [illegible] пуянлăхĕсене тăкакласан паттăр [illegible] кирек мĕнле практикăллă сыхлăн ту. Совет Союзне тесе [illegible]».

БЕЛЬГИЯ, ИРĔКЛĔ ФРАНЦИ

Договор пĕрлехи çĕнтерĕве хăвăртлатать

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бельги правительствин официальнăй представителĕ çапла каланă: Англипе Совет Союзĕ хушшинчи Договорăн принципĕ хăех те «вăрçа малалла туса пырассин тата мир тума хатĕрленессин чи паха фактĕ пулса тăрать».

Генерал де Голль çапла каланă: «Вăрçăра тата вăрçă хыççăн çĕнтерÿ тăвас тесе союзлă пуласси çинчен договор тунине кĕрешекен Франци хĕрÿллĕн хапăл туса кĕтсе илет. Кĕрешекен Франци çакна шанса тăрать: çĕнĕ Договор пĕрлехи çĕнтерĕве хăвăртлатать, пусмăра лекнĕ çĕршывсенчи халăхсене ирĕке кăларассине тата Европăра хăрушсăрлăх туса хурассине хăвăртлатать».

ПОЛЬША

Польша премьер-министрĕ генерал Сикорский Англипе Совет Союзĕ хушшинчи Договора ырлать

ЛОНДОН, июнĕн 12-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Польша премьер-министрĕ тата Польша çарĕн главнокомандующийĕ генерал Сикорский Совет Союзĕпе Англи хушшинче договор тунине тата Совет Союзĕпе Пĕрлешÿллĕ Штатсем килĕшÿ тунине пысăк кăмăллă ырлани çинчен пĕлтернĕ.

Сикорский çапла каланă: «Çак килĕшÿсем пĕрлешнĕ нацисен вăйĕсене пĕтĕçтерсе çĕнтерÿ тăвас ĕçе ярăççĕ. Договора Атлантика хартийĕн принципĕсем тăрăх тунине Польша правительстви уйрăмăнах ырласа кĕтсе илет».

Америка войскисем Çурçĕр Ирландие пырса çитни

ЛОНДОН, июнĕн 13-мĕш. (ТАСС). Америкăн Великобританири хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ çапла пĕлтерет: Америка войскисен çĕнĕ ушкăнĕ Çурçĕр Ирландин пĕр портне пырса çитнĕ. Çав войскăсем хушшинче броневиковăй чаçсем те пур. Америкăн Çурçĕр Ирландири войскисен командующийĕ генерал-майор Хартл çĕнĕрен пынă войскăсене хирĕç тухса кĕтсе илнĕ. Çав войскăсене илсе пынă суднăсен караванне Америкăн çар карапĕсем хуралласа пынă.

МТС-семпе колхозсенчи социализмлă ăмăрту

Лайăхрах ĕçлеме, тухăçлăрах тырпул туса илме пулатпăр

ÇĔМĔРЛЕ, июнĕн 15-мĕш. (Хамăр корр.). Колхозниксен пухăвĕ каçхине ĕç хыççăн пулчĕ. Унта ватă колхозниксем те, çамрăк ачасем те — пурте пулчĕç. Колхозниксене шăп пулма чĕнсе Мыслепри «Ударник» колхоз председателĕ Клочков юлташ пухăва уçрĕ. Пухăвăн кун йĕркинче пĕр ыйту — колхоз Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнасси çинчен. Колхозсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн условийĕсене вуласа ăнлантарса панă хыççăн, Клочков юлташ колхозăн задачисемпе ĕçĕсем çинчен каларĕ.

Председатель хыççăн Федорова колхозница пухура çапла каларĕ:

— Эпир хĕрарăмсем нумай хут лайăхрах ĕçлеме пултаратпăр, пултармалла та. Эпĕ «Путь крестьянина» колхоз членĕсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухма чĕннине ырлатăп. Вăйлă тырпул туса илес, ăна пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртес ĕçре пĕтĕм вăйпа ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме пулатăп.

Колхозниксем пĕр шухăшлă пулса Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Хăйсем çине пысăк обязательствăсем илчĕç. Колхоз 1942 çулта вăтам шутпа кашни гектартан 17 центнер махорка, 150 центнер çĕрулми, 145—150 центнер хăяр, 130—140 центнер помидор, 150—160 центнер купăста туса илме обязательство илчĕ. Тырпулсене кĕске срокра пухса кĕме, ĕç тухăçлăхне 10 процент çĕклеме пулчĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе колхоз государство панă планран ирттерсе татах 35 ĕне, 22 сурăх, 10 сысна пăхса ÿстерме тата колхозăн хурт-хăмăр утарне сарма, вĕсене 300 семьене çитерме пулчĕ.

Х. ЛИСИН.

Ăнăçлă пуçланă çулталăка ăнăçлăн вĕçлессишĕн

ШĂХАСАН. Районри колхозсем çураки ĕçĕсене пысăк çĕкленÿпе туса ирттерчĕç. Ялхуçалăх çулĕн малтанхи ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕç. Тĕштырăсем, техникăлă культурăсем тата пахча çимĕçсем акас плана район 104 процент тултарчĕ, колхозсем çĕршыв оборонин фондне хывма çураки планĕнчен ирттерсе пурĕ 506 гектар тĕштырă акса хăварчĕç. Пĕтĕмĕшпе илсен, кăçалхи çуракине колхозсем пысăк пахалăхпа турĕç. Кăçал пирĕн колхозсем агротехникăллă мероприятисене аван пурнăçларĕç. Суртырисем акнă çĕр лаптăкĕ çине пурĕ 51515 тонна тислĕк, 3161 центнер кĕл, 2182 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 118 тонна ытла минераллă удобрени тăкрăмăр. Планпа пăхнă агротехникăллă мероприятисене пурне те ирттерсе пурнăçланă. Çак ĕçе ăнăçлăн туса ирттерни районри колхозсене кăçал тухăçлăрах тырпул туса илме май парать.

Сталин юлташăн май уйăхĕнчи приказĕпе хавхаланса, районри нумай колхозсем ĕç тухăçлăхне вăйлăн ÿстерчĕç. Халĕ тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатас ĕç лайăх пулса пыни çакна витĕмлĕн кăтартать. Çуракинчи ĕçсенче 57 тракторист, 247 çын суха тунă çĕрте, 181 çын тырă акас ĕçре тата 626 çын сÿре тунă çĕрте стахановла ĕç тĕслĕхĕсене кăтартса ĕçлерĕç. Вĕсем куллен хастарлăн ĕçленипе пула районри колхозсем тĕштырăсем акса хăварас ĕçе 10 кун хушшинче вĕçлерĕç. Ворошилов, Киров ячĕпе тăракан, «Красный партизан», «Майăн 1-мĕш» тата ытти чылай колхозсем тĕштырăсем акас плана 5—6 кун хушшинче пурнăçларĕç.

Районри машинно-тракторнăй станци хăйĕн çуракинчи ĕççен планне 103,2 процент пурнăçларĕ. Вăтам шутпа 15 лаша вăйлĕ кашни трактор пуçне вăл 118-шер гектар сухаласа колхозсене ĕçре пысăк пулăшу пачĕ. Морозов юлташ ертсе пыракан трактор бригади çуракинчи ĕç планне 144 процент пурнăçларĕ, çураки хыççăнах ирхи çĕртме тума тытăнса, ку ĕçĕн планне те çĕр процентчĕпех пурнăçларĕ. Тракторист Николай Яковлев СТЗ тракторпа ĕçлесе çуракинчи ĕç планне 197 процент тултарчĕ. Çак вăхăтра вăл горючине 164 килограмм перекетлесе хăварчĕ. Халĕ ирхи çĕртме сухинче хĕрÿллĕн ĕçлет. Халĕ вăл çĕртме сухине 70 гектар ытла тунă. Çавăн пекех Максимов, Гордеев тата ытти хăшпĕр трактористсем те ĕçе пысăк хастарлăхпа туса пыраççĕ. Ирхи çĕртме планне МТС июнĕн 10-мĕш тĕлне 67 процент пурнăçланă.

Колхозниксемпе колхозницăсен патриотизмлă çĕкленĕвĕ ÿссех пырать. Новосибирск облаçĕнчи «Путь крестьянина», Казах ССР-ĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозсен пуçарăвĕ пирĕн колхозниксемпе колхозницăсен ĕçри хастарлăхне татах та çĕклерĕ. Вĕсен чĕнĕвне районри кашни колхозах çитерне, ăнлантарса панă. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва колхозсем хăйсем çине пысăк обязательствăсем илсе хутшăнаççĕ, вăйлă тырпул туса илессишĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме пулаççĕ.

Трактористсемпе комбайнерсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Вĕсем хăйсен çулталăкри ĕç планне 15 процент ирттерсе пурнăçлама, горючине 10 процент перекетлесе хăварма тата пур ĕçе те пысăк пахалăхпа вăхăтра тума обязательство илчĕç. Комбайнерсем кашни комбайнпа 400 гектар тырпул пухса кĕме обязательство илнĕ. Паянхи куна комбайнсен 9 моторне юсанă, 2 комбайна уборкăна тухма хатĕрлесе çитернĕ. МТС коллективĕ пур комбайнсене те июнĕн 1-мĕш тĕлне пĕтĕмĕшпех юсаса çитерме тăрăшать.

Пысăк тата хăвăрт тумалли ĕçсем çывхарса килеççĕ. Ăнăçлăн акса хăварнă тырăсене тăкаксăр, лайăх пухса кĕртмелле. Колхозниксен масси хушшинче агитациллĕ-ăнлантарулла ĕçе халĕ анлăрах сармалла. Çуракинчи ĕç опычĕсемпе туллин усă курса, малаллахи ĕçсене татах та лайăхрах туса ирттермелле.

Г. ЗАХАРОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

ПУЛĂ ĔРЧЕТЕÇÇĔ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Килейкассинчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз виçĕ çул хушши ĕнтĕ пĕвере зеркальнăй карп ятлă пулă ĕрчетет. Халĕ колхоз пĕверен пулă тытма пуçларĕ. Тытнă пулла колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе параççĕ.

В. ТРОФИМОВ.

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Рабочисем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ

Шупашкарти чăлхасемпе носкисем çыхакан фабрика коллективĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, июнь уйăхĕнче планран ирттерсе пиншер мăшăр чăлхапа носкисем çыхса кăларма обязательство илчĕ. Коллектив халĕ çак обязательствăна ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Июнь уйăхĕн малтанхи вунăкунлăхĕнчи ĕç планне нумай ирттерсе тултарчĕ.

Фабрикăра уйрăм рабочисемпе работницăсем хушшинчи ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Ăмăртăва рабочисенчен 75 проценчĕ хутшăннă та ĕнтĕ. Пĕр-пĕрин хушшинчи ăмăрту рабочисемпе работницăсен ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшать. Чăлхасемпе носкисем çыхакансем хăйсен сменăри нормисене кашни кун вăтамран 30 процент чухлĕ ирттерсе тултараççĕ. Ростова, Никифорова, Соляева тата ытти стахановкăсем те сменăра чăлхасем 50 мăшăр çыхас вырăнне 70—80 мăшăр çыхаççĕ.

Фабрика коллективĕн черетлĕ задачисенчен пĕри вăл — çамрăк рабочисене ĕçе вĕрентсе çитересси. Çавна май фабрикăра çамрăк рабочисен техникăллă вĕренÿне организациленĕ. Вĕренĕве опытлă рабочисем те çÿреççĕ, вĕсем хăйсем мĕнле ĕçлени çинчен çамрăксене каласа параççĕ.

М. КАМАНЕЦКИЙ.
Фабрикăри парторганизаци секретарĕ.

ÇĔНĔ ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕМ ИЛЧĔÇ

ÇĔМĔРЛЕ, июнĕн 15-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, комбинат коллективĕ май уйăхĕнчи производство планне ытлашшипех тултарчĕ. Тунă çитĕнÿпе хавхаланнă рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем халĕ çĕнĕ обязательствăсем илчĕç: июнь уйăхĕнчи ĕç планне 110 процент тултарма, стахановецсен ретне 10 процент, ударниксен ретне 15 процент ÿстерме пулчĕç.

Çак кунсенче комбинат коллективĕ питех те пысăк çĕкленÿпе ĕçлет. Чылай цехсен коллективĕсем хăйсен ĕç тухăçлăхне татах ÿстерчĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш номерлĕ цехсен коллективĕсем июнь уйăхĕн малтанхи вунă кунлăхĕнчи ĕç планне 110—115 процент тултарчĕç. Ильин, Терехов тата Артемьев рабочисем май уйăхĕнче сменăри нормăна 260 процент тултарнă, халĕ вĕсем 300-шер процент тултарса ĕçлеççĕ.

Çавăн пекех Паранкин, Волков, Гришин, Димитриев юлташсен стахановла бригадисем те кулленхи заданисене 150—200 процент тултараççĕ.

Тимĕр-тăмăр пухнă

СОВЕТСКОЕ. Комсомолăн колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсем фронта тимĕр-тăмăр пухса парса пулăшаççĕ.

Çак кунсенче Токшикри «Динамо» колхозри комсомолецсем 30 центнер, Уйкасри «Металлист» колхозра 105 килограмм тимĕр-тăмăр пухрĕç. Тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе уйрăмăнах И. Михайлов, А. Кузьмина тата П. Волков юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

М. СТЕПАНОВА.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШСКОМУ ТРЕСТУ ТОРГПЛОДООВОЩ

требуются: зоотехник, техник-строитель, товароведы, работник по снабжению, бухгалтер-ревизор, юрисконсульт, слесаря, шофера.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Свердлова, 35.

3—2.

Чувашской Республиканской конторе Промышленного Банка СССР

ТРЕБУЮТСЯ: финансисты-кредитники, конюх-возчик и машинистка.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 25.

ПРОМБАНК.

3—2.

ТРЕБУЕТСЯ

главный бухгалтер Селекционной станции в городе Цивильске.

Обеспечивается квартирой, питанием. Зарплата 600 р. в месяц.

Дирекция.

Требуются рабочие путейцы—чернорабочие, плотники, слесаря.

Имеется столовая и обеспечиваются общежитием. Обращаться по адресу: Ст. Чебоксары.

Отдел кадров.

СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ

на постоянную работу столяры, сапожники, ученики столярного и сапожного дела и агенты по скупке домашних вещей.

Обращаться: г. Чебоксары, ул. Ленина, д. № 11, отдел кадров Чебторга.

ЧЕБОКСАРСКАЯ ФАРМАЦЕВТИЧЕСКАЯ ШКОЛА НАРКОМЗДРАВА РСФСР

об'являет набор учащихся на 1942—43 учебный год.

Школа готовит помощников провизора.

Срок обучения 3 года.

В школу принимаются лица обоего пола в возрасте от 15 до 35 лет, имеющие образование в об'еме 7 классов средней школы или приравненных к ним других учебных заведений без приемных испытаний.

Прием заявлений о зачислении производится с 20 июня по 20 августа.

Заявление подается на имя директора с приложением следующих документов (в подлиннике): а) свидетельство об образовании, б) свидетельство о рождении, в) справка о здоровьи, г) две фотокарточки с собственноручной подписью на них, д) паспорт пред'является лично.

Начало занятий с 1 сентября.

Заявления и запросы с приложением марок на 60 коп. подавать по адресу: гор. Чебоксары, Чувашской АССР, ул. Чувашская, № 15.

ДИРЕКЦИЯ.

КАЗАНСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ ИМЕНИ МАКСИМА ГОРЬКОГО

об'являет прием студентов на 1942—43 учебный год.

Срок обучения в институте — 3 года.

Условия приема в институт — общие для всех вузов.

Институт готовит агрономов высшей квалификации. Преподавание в институте ведут опытные профессоры и доценты.

Во время войны Казанский сельскохозяйственный институт размещается на территории своего учебного хозяйства, в живописной местности у озера Кабан, на ферме № 2, вблизи гор. Казани. Между институтом и городом существует автобусная связь.

Учебное хозяйство располагает полевыми посевами, огородом, садом, ягодником, пасекой и высокопродуктивным животноводством.

Студенты института обеспечиваются дешевым питанием и общежитием.

Заявления о приеме в институт принимаются с 1-го июля по 31 июля 1942 года по адресу: гор. Казань, п/о II, ферма № 2, Сельскохозяйственный институт, директору.

Городское отделение приемной комиссии: гор. Казань, ул. Жданова, д. № 47, комн. 14.

К заявлению прилагаются подлинный документ о среднем образовании, автобиография и 3 фотокарточки.

2—1

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 167 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64 п. л.